# Сана мĕншĕн чунтан мухтас мар

## Çĕршыв-аннемĕр, тав сана

Çĕршыв-аннемĕр, тав сана,
Пире эс патăн ырлăхна.
Вăй-хал сунан кал-кал утма,
Чуна çĕклен ĕçчен пулма.

Çĕршыв-аннемĕр, тав сана,
Эс — пурнăç, ырă самана.
Илемлĕ, аслă туслăха
Пиллерĕн пĕтĕм халăха.

Çĕршыв-аннемĕр, тав сана,
Ĕмĕр упра чысна,
ятна.
Юрларăм юрă чун-вартан,
Эпир телейлĕ эс пуртан!



## Тăван Шупашкар

Чун-чĕре юррине эп шырарăм,
Ачаран кăмăлларăм сана,
Çуллен-çул çĕнелен Шупашкарăм,
Эс кӳретĕн илем таврана.

Шупашкарăм, тăван Шупашкар,
Сана мĕншĕн чунтан мухтас мар!
Ĕмĕрех эс пĕрле Атăлпа,
Малалла эс утан çĕршывпа.

Чун-чĕре юррине эп пуçларăм,
Саламлатăп тăван хулана.
Çурхи сар хĕвел пек Шупашкарăм,
Юрататăп сан çутă сăнна.

Шупашкарăм, тăван Шупашкар,
Сана мĕншĕн чунтан мухтас мар,—
Ĕмĕрех эс пĕрле Атăлпа,
Малалла эс утан çĕршывпа.

Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ

Чун-чĕре юррине эп юрларăм,
Куç илмерĕм пĕрре сан çинчен.
Туслăхра пурăнан Шупашкарăм,
Ӳс татах, куллен-кун чечеклен.

Шупашкарăм, тăван Шупашкар,
Сана мĕншĕн чунтан мухтас мар!
Ĕмĕрех эс пĕрле Атăлпа,
Малалла эс утан çĕршывпа.

## Сад янăрать саркайăк сассипе*

Ирпе ирех тăратăп ĕç умне...
Хĕвел хĕртет, сапать, ай, шевлине.
Каш-кашласа хирте тырпул ӳсет,
Çунатланса хăмла, ай, çĕкленет.

Сад янăрать саркайăк сассипе,
Чун савăнать туссем маттуррипе.

Умра — эпир ӳстернĕ çăкасем,
Шăнкăртатса юхан, ай, çырмасем,
Шур акăшсем иленнĕ кӳлĕсем,
Йăлтăргатса вылян, ай, çăлкуçсем.

Сад янăрать саркайăк сассипе,
Чун савăнать туссем маттуррипе.

Ăмăртмалла вĕçеççĕ чĕкеçсем,
Мĕнле хитре вĕсен, ай, юррисем!
Мĕнле аван, хавас чун-чĕрене!
Тавах çĕршыв-аннемĕр илемне.

Сад янăрать саркайăк сассипе,
Чун савăнать туссем маттуррипе.

* *Ку сăвва П. Эреветпе пĕрле çырнă.*



## Тăванлăх юрри

Юрлас килет, тăванăмсем,
Сире курсан, пĕрле пулсан.
Сĕтелĕрсем, кĕрекĕрсем
Ялан çапла тулли тăрсан.

Ташлас килет, тăванăмсем,
Хуткупăс кĕвĕ пуçласан.
Ытарма çук кăмăлăрсем
Хăна-йыша тараватран.

Ташлас килет, тăванăмсем,
Çул куркине алла тытсан.
Юлаç калас сăмахăмсем
Киле кайма пуçтарăнсан.

Чун савăнать, тăванăмсем,
Куç умĕнче эсир пуртан.
Мăшăр çунат хушать чĕрем
Ĕмĕр пĕрле пурăннăран.



## Пăхсам, савни, кантăкран

Умра каçхи Шупашкар
Сăмах хушать манпала.
Ăшăма тек ан çунтар,
Пăхсам, савни, кантăкран.

Килет шурă пăрахут
Атăлпала, анатран
Сасă пачĕ виçĕ хут.
Пăхсам, савни, кантăкран.

Чунта хĕрӳ шĕл-кăвар—
Чĕрем саншăн çуннăран.
Чипер сăнна ан пытар,
Пăхсам, савни, кантăкран